**Историре çырăнса юлнинчен хут, компас, тар /порох/ тата этемшĕн кирлĕ ытти япала пирвайхи хут Китайра çурални паллă. Халĕ хăйĕн таварĕсене тĕнчипех саракан çĕр-шыв çыннипе ку таранччен сăмах вакласа курманччĕ. Нумаях пулмасть аякри çав тăрăхран килнĕ пикепе калаçма тӳр килчĕ. Китай пики Чăваш Ене епле майпа çитнĕ-ха?**

Катя /хăйне килĕшнипе çапла чĕнтерет, чăн ячĕ-шывĕ - Мейжиао Чен/ Раççейре пирвайхи хут. Вăл кăрлач уйăхĕнче çеç килнĕ. Çичĕ ютра тĕпленнисен шухăшлавĕнче чылай чухне - пирĕн çĕр-шывра питĕ сивĕ, кунта пурăнакансем ĕçкĕпе иртĕхеççĕ имĕш. Катя ăна-кăна илтмен-ха, анчах çулталăкăн ăшă тапхăрĕнче вăрăм тунаран канăç çуккине пĕр кĕнекере вуласа пĕлнĕскер питĕ пăшăрханать. Ку таранччен Раççей çинчен илтмен-курманскер çĕр-çĕр çухрăм парăнтарса Чăваш Ене мĕнле тĕллевпе çитнĕ-ха?

Дзилинь провинцийĕнче çуралнăскер шкулта ăс пухнă хыççăн Хайнань университетĕнче пĕлĕвне тарăнлатнă, унтах вырăс чĕлхине 2,5 çул тĕшмĕртнĕ. Шăпах унта Катя пирвайхи хут вырăс çыннипе, Аçтăрхан педагогĕпе, тĕл пулнă. Камбоджăра пĕр вăхăт ĕçленĕ Катьăна Хайнань университечĕ Чăваш Ене кайма сĕннĕ. Кăçал И.Н.Ульянов ячĕллĕ ЧПУн студенчĕсем валли китай чĕлхин курсĕсене уçнă. Вĕсене шăпах Катя ертсе пырать. Асăннă вĕренӳ заведенийĕн санатори-профилакторин пĕр пӳлĕмĕнче пурăнаканскер кунĕпе тенĕ пекех кĕнеке-журнал вулать, занятисене хатĕрленет. Çанталăкран хăрасах урама тухса çӳремест.

- Халĕ сивĕ, кайран вăрăм тунасем тарăхтарĕç ĕнтĕ, - шӳтлерĕ Бэйчэн пики.

Калаçăва тăснă май Катьăран çĕр çинчи чи пысăк наци пирки ыйтрăм. Ара, вĕсен тăрăхĕнче иккĕмĕш тата ун хыççăнхи ачашăн штраф тӳлеттернине пĕрре мар илтнĕ.

- Ялта пурăнакансен пĕрремĕш пепки хĕр ача пулчĕ тĕк иккĕмĕшне çуратма ирĕк пур. Хĕр ача университета вĕренме кĕнĕ чухне ыттисенчен 10 балл ытларах пухаять. Упăшкипе арăмĕ çемьере пĕртен пĕр ача пулнă тăк вĕсем те икĕ ача çинчен ĕмĕтленме пултараççĕ, - ăнлантарчĕ çамрăк преподаватель. Китай хĕрĕсен пысăк пайĕ - 22 çулта, каччăсем 24-ра çемье çавăраççĕ иккен. Хальхи саманара çак наци çамрăкĕсем те çитĕннисен ретне /18 çул/ тăричченех юрату çимĕçĕн тутине пĕлеççĕ, пулас мăшăра та ашшĕ-амăшĕ тупнине мар, хăйсем килĕштернине суйлаççĕ. Анчах çак халăх хут

уйӑрттармасӑр пурӑнакансене сивлет, ҫавӑнпах унашкал тӗслӗх сайра хутра ҫеҫ тӗл пулать. Туй кунӗнче каччӑ хӑйӗн килӗнчен тухса хӗр патне каять. Унтан вӗсем хӑйсен хваттерне каяҫҫӗ. Каҫ кӳлӗм кафе-ресторанра мӗн пур тӑвана пухса уявлаҫҫӗ. Заведенире пике шурӑ кӗпене улӑштарса наци тумне тӑхӑнать. Мейжиао хӑй ҫӗрӗ ылмаштарма хӑҫан хатӗрленет-ши? Пинбол, бадминтон вӑййисене кӑмӑллаканскер 28 ҫулта ҫемье чӑмӑртама палӑртать.

- Йӑва ҫавӑриччен ура ҫине тӑмалла. Пирӗн тӑрӑхра авланнӑ ывӑлне, качча тухнӑ хӗрне ашшӗ-амӑшӗ пӗр пус памасан та пултарать. Унччен ытти ҫӗр-шыва та ҫитсе курасчӗ. Вьетнамра, Камбоджӑра, Раҫҫейре пултӑм. Китайӑн мӗн пур кӗтесӗпе хальлӗхе паллашаймарӑм-ха. Тата Таиланда питӗ каяс килет, - пытармарӗ 24-ри пике. Ҫӗрӗ тӑхӑнма хӑш наци ҫынни пулни пӗлтерӗшлӗ-ши уншӑн?

- Маншӑн каччӑ кӑмӑлӗпе, тыткаларӑшӗпе, тӑрӑшулӑхӗпе, ыттисене хисеплеме пӗлессипе чӑн-чӑн ҫын пулни хаклӑ. Анчах ҫак тӑрӑхра тӗпленес тесен, ахӑртнех, ӗмӗтленни пурнӑҫланмӗ. Сирӗн каччӑсем ҫав тери телейлӗ - кунти хӗрсем питӗ чипер, - йӑл кулчӗ Катя.

Массӑллӑ информаци хатӗрӗсенче Китайра ӳсекен тӗрлӗ курӑкран хатӗрленӗ эмелсене туянма чӗннине асӑрхама пулать. Ҫак наци ҫыннисен ӗмӗрӗ вӑрӑм пулни сиплӗ курӑксемпе усӑ курнинчен килмест-ши?

- Ҫӗр ытла ҫул пурӑнакансем пур, вӗсенчен ытларахӑшӗ ялсенче тӗпленнӗ. Эпир ытларах улма-ҫырлапа, пахча ҫимӗҫпе апатланатпӑр. Аш-пӑшран хатӗрленӗ апат сахал. Ҫӑкӑр ирхине ҫеҫ ҫиетпӗр. Рис кӗрпинчен янтӑланӑ апат сӗтел ҫинче ирхине тата кӑнтӑрла ларать. Симӗс чей усӑллӑ, ӑна кунне темиҫе те ӗҫетпӗр. Тата эпир чейе сахӑр пачах ямастпӑр, пылак ҫимӗҫпе сӑйланмастпӑр, - сӑмах ҫӑмхине сӳтрӗ Мейжиао Чен. - Тай-ди хӑнӑхтарӑвӗсене ирсерен тӑвакансем пур. Ҫак йӗркене ытларах аслӑ ӑрурисем пӑхӑнаҫҫӗ. Ҫамрӑксен вӗсене пӑхӑнма чӑтӑмлӑх ҫитмест, мӗншӗн тесен хӑнӑхтарусене вӑрах, васкамасӑр тумалла. Хӗрсемпе каччӑсем кӗлеткене чылай чухне чупса пиҫӗхтереҫҫӗ.

Унта пурӑнакан ар-хӗрӗн тӗрлӗ хӑнӑхтару тума ӳркеннине кура кӗнеке тытса ларма вӑхӑт пур-ши? Китайра кӗнеке еплерех пулнине манӗҫ тесе, тен, ытлашши калатӑп, анчах Катя пӗлтернӗ тӑрӑх - ентешӗсем телефонри электрон кӗнекесене ҫеҫ вулаҫҫӗ. Каччӑсенчен хӑшӗ-пӗри пушӑ вӑхӑта компьютер умӗнче ирттерет, хӗрсем лавккасем

тӑрӑх ҫӳреҫҫӗ. Катя кашни ҫемьере тенӗ пекех автомашина пуррине пӗлтерчӗ. Апла пулин те вӑл ҫуран утма кӑмӑлланине, метропа ҫитме йӳнӗреххине асӑнчӗ.

Хӗвел тухӑҫ Ази ҫӗр-шывӗнче, преподаватель каланӑ тӑрӑх, гуманитари профессине алла илнисене хисеплеҫҫӗ. Ҫемье пуҫӗсем - 60 ҫулта, хӗрарӑмсем 50-ра тивӗҫлӗ канӑва тухаҫҫӗ. Ҫак тапхӑра ҫитнисем кӑмӑл пулсан малалла ӗҫлеме пултараҫҫӗ. Раҫҫей хулисенче ыйткалакансене курма тивет. Китайра ҫакнашкал ӳкерчӗк пур-ши?

- Кил-ҫуртсӑр ҫын пирӗн тӑрӑхра та ҫук мар. Йывӑр лару-тӑрӑва ҫакланнисене патшалӑх хӗлле ятарлӑ ҫуртсене вырнаҫтарать, ҫулла вара вӗсене «ирӗке» кӑларать. Тӑлӑх ачасем те пур. 18 ҫул тултарсан вӗсен интернатран кайма, пурӑнмалли кӗтес ыйтӑвне те хӑйсенех татса пама тивет, - ӑнлантарчӗ китай, акӑлчан, вырӑс чӗлхисене пӗлекен Катя.

Унӑн пӳлӗмӗнче Китайран илсе килнӗ япаласене асӑрхарӑм. Мейжиао вӗсем ӑна пулӑшса пынине, ӑнӑҫу кӳнине ӑнлантарчӗ. Стенаран ҫакнӑ амулетсем, алӑк ҫумне ҫыпӑҫтарнӑ календарьсем мӗншӗн хӗрлӗ тӗслӗ тата мӑшӑрлӑ пулни кӑсӑклантарчӗ.

- Китай ҫыннисем мӑшӑрлӑ хисепсене кӑмӑллаҫҫӗ. Ытларах «6» тата «8» цифрӑсене юратаҫҫӗ. Пӗрремӗшӗ - ӑнӑҫу, иккӗмӗшӗ пуянлӑх кӳрет. Пекинра йӗркеленӗ ҫуллахи Олимп вӑййисене ахальтен мар ҫурла уйӑхӗн 8-мӗшӗнче каҫхи сакӑр сехет иртни 8 минутра пуҫланӑ. «9» чи пысӑкки, чи хисепли шутланать, унпа патшасем усӑ курнӑ. Анчах «4» хисепе калама та шикленеҫҫӗ. Вӑл «вилӗм» сӑмахпа пӗрешкел илтӗнет, - чунне уҫрӗ «Анна Каренинӑна» китайла виҫӗ хут вуласа тухнӑскер. Тӑван халӑхӗ хӗрлӗ тӗсе килӗштернипе пӗрлех пирӗн юрӑҫсене Витаса, Алсуна, Пушкин хайлавӗсене шутсӑр кӑмӑлланине каларӗ. Катя ҫавӑн пекех Китай ҫыннисен бамбукран тунӑ кӗнекине /паллах, ӗлӗкхи евӗррине/ кӑтартрӗ. Унта 500 ытла иероглиф ӳкернӗ, кашниех ҫав ҫӗр-шыври хушамата ӑнлантарать.

Катьӑн ҫӗр-шывӗнче панда символ шутланать. Мӗншӗн тетӗр-и? Ҫак чӗр чун вӗсем патӗнче кӑна пурӑнать. Патшалӑх ӑна ытти ҫӗр-шыври зоопарксене парнелесен ҫурисене тӑван тӑрӑха тавӑрса пама хушать.

Мейжиао Чен хальлӗхе пирӗн тӑрӑхпа паллашма ӗлкӗреймен-ха. Ҫулталӑк вӗҫлениччен вӑл Шупашкар илемне курса киленӗ. Ҫак тапхӑрта тӑван чӗлхине вӗрентекенскер, тен,

чăвашла пуплеме те хăнăхĕ. Тĕл пулсан Катя хальлĕхе: «Салам!» - теме çеç пултарать. Эпĕ те калаçăва: «Нихау, нихама?» - тесе пуçарма тăрăшăп.

**Елена ТРОФИМОВА. Газета «Çамрăксен хаçачĕ».2013.22 марта.**